Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

91 (7731) № ✻ Шăмат кун, 2009 çулхи ноябрĕн (чӳк) 14-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

**Ĕçре тăрăшуллисем**

## Шут ĕçĕ тимлĕх ыйтать



***Сăн ӳкерчĕкре эсир ял тăрăхĕсем хушшинчи централизациленĕ бухгалтери ĕçченĕсене Татьяна Михайловна Никитинапа Надежда Витальевна Шуйцевана куратăр. Пĕтĕмпе вара кунта 6 бухгалтер вăй хурать. Кашнинех вĕсене уйрăм ял тăрăхĕсене çирĕплетсе панă. Пĕтĕм бухгалтери, шут ĕçĕн докуменчĕсене йĕркелесе туса пырасси вĕсем çине тиенет. Бухгалтерсем вара шанса панă ĕçе тивĕçлипе пурнăçлама тăрăшаççĕ. Кунта тĕп бухгалтерта вăй хуракан Галина Николаевна Вязова та бухгалтерсен ĕçĕпе кăмăллă.***

**В. ШАПОШНИКОВ**
**сăн ӳкерчĕкĕ.**

**Район администрацийĕнче**

## Пĕчĕк харпăрлăх формисен утăмĕсем

Иртнĕ юн кун, чӳк уйăхĕн 11-мĕшĕнче, район администрацийĕн ларусем ирттермелли залĕнче пĕчĕк тата вăтам предпринимательство кунĕ иртрĕ. Кун йĕркинче çак сферăра вăй хуракансем вырăнти самоуправлени органĕсен тата патшалăх службинче тăракансен представителĕсемпе ирттернĕ тĕл пулусем пулчĕç. Вĕсенче икĕ ен Муркаш районĕнчи пĕчĕк тата вăтам предпринимательствăн кăçалхи 9 уйăхри аталану утăмĕсене тишкерчĕ. Налук законодательствинчи юлашки çĕнĕлĕхсем, пенси сферинчи улшăнусем, районти çамрăксен политикине аталантарасси кăçалхи январь-сентябрь уйăхĕсенче епле пулса пыни – кашни ĕçлĕ çыншăнах куллен кирлĕ хыпарсем. Район предпринимателĕсем çавăн пекех районти бизнес-инкубатор ĕçĕпе те çывăхарах паллашрĕç.

Пĕчĕк тата вăтам предпринимательство районăн экономика аталанăвĕн ӳсĕмĕнче, рынока пысăк пахалăхлă таварсемпе тивĕçтерес ĕçре, хушма ĕç вырăнĕсем туса парассипе пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать. Статистика кăтартăвĕсемпе юпа уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне районта пĕчĕк тата вăтам предприятисем пурĕ 112 шутланаççĕ. Вĕсемсĕр пуçне Муркаш енре 668 индивидуаллă предприниматель, 67 хресчен (фермер) хуçалăхĕ, 16 ял хуçалăх потребитель кооперативĕ. Пĕчĕк тата вăтам бизнесра вăй хуракансем пурĕ 2200 çын е район экономикипе çыхăннă çынсен вăтам хисепĕн 18 процентчĕ. Отрасльсен структуринче унччченхи пекех пысăк тӳпе суту-илӳпе обществăлла апатланăва тивет – 34 процент. Ял хуçалăхĕ – 30 процент, промышленность – 17 процент, строительство – 11 процент, тĕрлĕ услугăсемпе тивĕçтересси – 8 процент.

Районта «2007-2010 çулсенче пĕчĕк харпăрлăхăн хуçалăх формисене аталантарасси» программа пурнăçа кĕрсе пырать.Çакна валли 5 çуллăха пăхнă пĕтĕмĕшле финанс калăпăшĕ – 156 миллион тенкĕ.

Пĕчĕк харпăрлăхăн хуçалăх формисем кăçалхи 10 уйăхра пурĕ 220,4 миллион тенкĕлĕх (районăн пĕтĕмĕшле калăпăшĕн 38 процентчĕ) продукци туса илнĕ.

Пĕчĕк тата вăтам предпринимательство субъекчĕсенчен çак тапхăрта бюджетсене 28 миллион тенкĕ налук пуçтарăннă е пĕтĕмĕшле калăпăшăн 29 процентчĕ.

Тĕнчери экономикăпа финанс кризисне пăхмасăрах районта пĕчĕк тата вăтам предпринимательство аталансах пырать. Январь-октябрь уйăхĕсенче суту-илӳпе обществăлла апатланăвăн 18 предприятийĕ уçăлнă, 44 хушма ĕç вырăнĕ туса панă.

**А. ПЕТРОВ.**

**Ял хуçалăх техникине хĕллехи управа лартрăмăр**

## Вĕсем ыранхи кунпа пурăнаççĕ

Çĕр пичĕ шурă юрпа витĕнчĕ. Çавăнпа пĕрлех ял хуçалăхĕнчи уй-хир ĕçĕсем те вĕçленчĕç. Анчах мĕн иртекенни йăлтах çаврăнса килет. Акă сисмĕпĕр те, çур аки ума тăрĕ. Ыранхи кунпа пурăнакансем вара ăна хатĕрленме тытăннă та ĕнтĕ. Çакна ял хуçалăх предприятийĕсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче иртнĕ çуркуннерен кĕркуннеччен хирте ĕçленĕ техникăна хĕллехи управа лартассипе епле тăрăшнине пăхсан та хаклама пулать. Иртнĕ кунсенче район пуçлăхĕн йышăнăвĕпе çакна пурнăçлама йĕркеленĕ комисси хăйĕн ĕçне пĕтĕмлетрĕ. Унпа килĕшӳллĕн район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. Иванов «Районти ял хуçалăх предприятийĕсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче 2009 çулта ял хуçалăх техникине управа лартассине чи лайăх йĕркелессипе иртернĕ смотр-конкурс пĕтĕмлетĕвĕсем çинчен» йышăну кăларчĕ. Унпа килĕшӳллĕн смотр-конкурс çĕнтерӳçи, унчченхи çулхисенчи пекех, «Герой» ял хуçалăх производство кооперативĕ пулса тăчĕ. Вĕсене район администрацийĕн 1-мĕш степеньлĕ дипломĕпе тата 3000 тенкĕ укçан премипе наградăланă.



Иккĕмĕш вырăнта ял хуçалăх техникине управа лартассипе малалла пысăк утăм тунă Суворов яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕ. Вĕсем район администрацийĕн 2-мĕш степеньлĕ дипломĕпе 2000 тенкĕ укçан премине тивĕçнĕ.

Виççĕмĕш вырăнта «Орининино» пĕрлешӳллĕ хуçалăхпа Шетмĕпуçĕнчи Виталий Владимирович Горбуновăн хресчен (фермер) хуçалăхĕ. Вĕсене район администрацийĕн 3-мĕш степеньлĕ дипломĕпе тата 1000-шер тенкĕ укçан премипе чысланă.

Çулсеренех республикăра техникăна управа лартассине чи лайăх йĕркелессипе ирттерекен смотр-конкурс положенийĕпе килĕшӳллĕн «Герой» хуçалăха республикăри конкурса тăратнă.

**А. БЕЛОВ.**

***Хушса калани.*** Тĕрĕслев комиссийĕ çакна палăртать. Районти ял хуçалăх предприятийĕсенче ыранхи кунпа пурăнакан тата аталанакан хуçалăхсен йышĕ палăрать. Пĕрлешӳллĕ хуçалăх ертӳçисемпе инженери службисем, уйрăм механизаторсем, хресчен (фермер) хуçалăхĕсем паян пурнăçланă ĕçпе çеç лăпланмаççĕ, ыранхи кунпа пурăнаççĕ, çĕннине шыраççĕ.

Çӳлерех асăннă предприятисемпе пĕрлех пĕр климат условийĕсенчех ĕçлесе пурăнакан «Хлебороб», «Волга», «Сеятель», «Лидер», Ленин яч. хис., К. Иванов яч. хис., «Рассвет», «Агро-Урожай», Е. Андреев яч. хис. хуçалăхсенче «Ял хуçалăхĕнче усă куракан техника. Управ правилисем» ГОСТ-7751-85 ыйтнине пăхăнмаççĕ. Ку хуçалăхсенче инженерипе техника персоналне ял хуçалăх техникине хĕллехи управа лартассипе технологие пăхăнма хавхалану условийĕсем туса паман.

**Раççей Президенчĕн Çырăвĕ**

## Çĕршыва пур енлĕн çĕнетсе улăштармалла

Раççей Президенчĕ Дмитрий Медведев кĕçнерни кун Федераллă Пухăва Çырупа тухрĕ. Çырура президент çĕршыв аталанăвĕн пĕлтерĕшлĕ çул-йĕрĕсене палăртрĕ. Çирĕм пĕрремĕш ĕмĕрте Раççее пур енлĕн çĕнетсе улăштармалла. Çак ĕçе демократи хаклăхĕсемпе институчĕсем çинче никĕслесе туса ирттермелле.

Çырăва хатĕрленĕ чухне президентăн «Раççей, малалла!» статйи çине граждансем янă сĕнӳсемпе шухăшсене шута илнĕ. Пĕтĕмпе çак статья çине 18657 комментари килнĕ. Право, суд системи, коррупципе кĕрешес ыйтусемпе 3241 (17,37 процент) сĕнӳ пулнă. Экономика, технологи, наука ыйтăвĕсемпе – 5417 сĕнӳ (29,03 процент). Политика системи, патшалăх управленийĕ, гражданла общество ыйтăвĕсемпе – 3716 (19,92 процент).

**Кĕскен**

## Тирпейлĕх грипран сыхлать

Республикăра грипп чирĕ сарăлсах пырать. Иртнĕ кунсенче грипăн А вирусĕн H1N1 тĕсне Шупашкарта 3 тĕслĕх тупса палăртнине пĕлтернĕччĕ, халĕ вара лаборатори тĕпчевĕсем тата тепĕр 8 çын çак вируса çаклатнине çирĕплетсе панă. Çапла вара çак гриппа Çĕнĕ Шупашкар, Канаш хулисенче тата Элĕк районĕнче чирлекенсем пур.

Чăваш Республикинчи Роспотребнадзор управленийĕн Муркашри уйрăмĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, пирĕн районта кун пек тĕслĕхсем çук. Анчах та пурин те сыхă пулмалла. Хăвăра гигиена тĕлĕшĕнчен тирпейлĕ тытни пулăшать. Урамра перчеткесемпе çӳрени те, алăсене супăньпе çуни те грипп вирусне ертессинчен 30-60 процент таран сыхлать.

Паянхи кун тĕлне вара районта Сосновкăри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулта çеç лару-тăру йывăртарах: 84 ачаран 26 ача гриппа чирлĕ. Ку кăтарту шкула карантина хупасси çинчен ыйту кăларса тăратать.

## Перекет банкĕнчен – парнесем

Кĕçнерни кун, ноябрĕн 12-мĕшĕнче, Перекет банкне йĕркелесе янăранпа 168 çул çитрĕ. Çавна май Раççей Перекет банкĕн Чăваш Республикинчи 8613 № уйрăмĕн Муркашри хушма офисĕ те хăйĕн клиенчĕсене савăнăçлă уяв туса пачĕ.

«Банка парăннăшăн» номинацире çĕнтерсе, Атапай ялĕнчи Р.А. Медова 10 пин тенкĕне тивĕçрĕ. Вăл 30 çул ытла ĕнтĕ Перекет банкĕн вкладчикĕ. Пенсионерсем хушшинче те ятарлă тираж иртрĕ. 85 пенсионер пурĕ 40 пин тенкĕлĕх сумма выляса илчĕ. Уяв кунĕнче хăйсен счечĕ çине 30 пин тенкĕрен кая мар укçа хуракансем те парнесĕр юлмарĕç. Пылак çимĕçсемпе хăналани те банк хăйĕн клиенчĕсене хисепленинех кăтартрĕ.

Кăçалхи ноябрĕн 12-мĕшĕнче çут тĕнчене килнĕ пепкесем вара çитес кунсенчех ятарлă кĕмĕл укçасене тивĕçĕç.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Суя пиркиех**

## Укçан тӳлеме тивет

Октябрĕн 16-мĕшĕнче Муркаш район сучĕ район администрацийĕн пуçлăхĕн Ю.А. Ивановăн иск ыйтăвне тивĕçтерессипе ĕç пăхса тухнă. Заявленире Ю.А. Иванов «Взятка» информаципе аналитика хаçатĕнче (2009 çулхи июнĕн 9-мĕшĕнчи 4-мĕш номерте – «Административная дубинка на службе главы района», 2009 çулхи июлĕн 23-мĕшĕнчи 5-мĕш номерте – «Моргаушский район ожидает полный коллапс», 2009 çулхи июлĕн 23-мĕшĕнчи 5-мĕш номерте – «Партия власти прикрывает главу района») хăйĕн пирки суя информацисем пичетлени пирки пĕлтернĕ. Суд çак ĕçе пăхса тухса çын чысне тата ĕç репутацине вараланă тесе палăртнă. Мораль тĕлĕшпе кӳнĕ сиене саплаштарма «Взятка» информаципе аналитика хаçачĕн тĕп редакторĕнчен Э.В. Мочаловран тата хаçат редакцийĕнчен Ю.А. Иванова 100 пин тенкĕ шыраса пама йышăннă, хаçатăн çывăх номерĕнче Ю.А. Иванов пирки суя сведенисем пичетлени çинчен хирĕçлени (опровержени) пичетлесе кăларма хушнă.

Октябрĕн 21-мĕшĕнче вара тепĕр суд ларăвĕ иртнĕ. Ку хутĕнче çӳлте асăннă хаçат тĕлĕшпе иск заявленийĕ тăратаканĕ Муркаш район администрацийĕ пулнă. Суда иск тăратни вара «Взятка» информаципе аналитика хаçачĕн 2009 çулхи майăн 15-мĕшĕнчи 3-мĕш номерĕнчи «Земля и закон: передел или беспредел?» статьяра Муркаш район администрацийĕ пирки суя информаци сарнипе çыхăннă. Суд ларăвĕнче асăннă иск заявленине пăхса тухнă май мораль тĕлĕшĕнчен кӳнĕ сиене саплаштарма район администрацине «Взятка» информаципе аналитика хаçачĕн редакцийĕнчен 50 пин тенкĕ шыраса пама йышăннă.

**ÇЫРĂНТАРУ**

**Хаклă вулакансем! Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата 2010 çулхи пĕрремĕш çур çулта илсе тăма унччченхи хакпах çырăнтараççĕ. Ултă уйăха çырăнмалли хак – 191 тенкĕ те 70 пус.**